Кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке



УХСАЙ ЯККӐВӖ

# СӐСАР ҪӖЛӖК

Чӑвашгиз 1947

ПР ВЕРЕНО
2007

*Кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке*

Чув.
2-185 а.

УХСАЙ ЯККАВӖ

# СӐСАР ҪӖЛӖК

Ӳкерчӗкӗсем П. Сизовӑн

28403

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1947

*Яков Гаврилович Ухсай 1911 çулта Пушкăрт республикинче, Пишпулек районĕнче, Слакпуç ялĕнчи хресчен çемьинче çуралнă.*

*Хăйсен ялĕнчи шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, вăл Пишпулекри хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче вĕреннĕ, 1928—1929 çулсенче Ĕпхӳ хулинчи педагогика институтĕнче вĕреннĕ, 1930 çулта Мускаври Государство Университечĕн литература факультетне кĕнĕ, унта виçĕ çул çурă вĕреннĕ.*

*1932—1934 çулсенче Яков Ухсай чăвашсен Мускавра тухса тăракан „Коммунар" хаçат редакцинче, 1935—1936 çулсенче Пушкăрт республикинче литературăна тата историне тĕпчекен институтра ĕçленĕ. 1938—1939 çулсенче вăл Ульяновск хулинчи чăваш педагогика училищинче вĕрентнĕ, Отечественнăй вăрçă умĕнхи çулсенче литература ĕçĕпе кăна пурăннă.*

*1942 çултан пуçласа 1946 çулччен Ухсай Совет Çарĕн ретĕнче пулнă, нимĕç фашисчĕсене хирĕç Тăван çĕршывшăн çапăçусенче палăрнăшăн ăна Отечественнăй вăрçăн иккĕмĕш степеньлĕ орденне панă.*

*Ухсайăн чи малтанхи сăвви 1929 çулта „Сунтал" журналта пичетленнĕ. Унăн çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă: „Савăнăç кĕнеки", „Вут чĕлхе", „Тутимĕр", „Ĕмĕт", „Ял хыпарĕсем", „Лирика", „Салтак кĕнеки" тата ытти сем те.*

*Я. Г. Ухсайăн чылай сăввисем вырăсла чĕлхепе пичетленсе тухнă.*

8/х 28409-цв.
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР
Гос. публичная библиотека в Ленинграде

Уртемей мучи ҫӳренӗ
Хуп-хура шӗлепкепе,
Пулнӑ арӑмӗ ҫӗленӗ
Икӗ кантӑр пир кӗпе.

Чӗлӗмӗ те пулнӑ унӑн,
Пӑхӑрпа тыттарнӑскер.
Ҫӗрпӳри ӑстаҫӑ тунӑ,—
Чӑпӑкӗ питех кӗске.

Вӑл малтан кӗске те марччӗ,
Туртмалли пулман чухне,
Уртемей мучи туратчӗ
Вӗрене чӑпӑк вӗҫне.

Чӗлӗмне вара чӗртетчӗ,
Сӑвӑратчӗ пӑк та пак.
Ҫӑпата сутса илетчӗ
Хушӑран кӑна табак.

Ҫиҫӗм пек пӗрре сасартӑк
Сарӑлчӗ хыпар ялта.
(Унсӑрӑн хитре сӑсар та
Пулмӗччӗ нихҫан унта).

—Революци пулнă, теççĕ.
Сирпĕннĕ иккен патша.
Калаçса ялта кĕрлеççĕ
Çамрăкки, ватти, вĕт-шак.

Халăх хыççăн ака ĕнтĕ
Пирĕн ватă Уртемей,
Ĕмĕрĕ пайтах пулин те,
Шыраса çӳрет телей.

Пуртă тытнă, йăтнă сенĕк,
Аллинче хăшин чукмар...
Уртемей те тем çĕкленĕ,
Ун алли те пушă мар.

Анасем шутне картмалăх
Аллинче иккен туя.
Пĕлĕт пек хăпса мĕн халăх
Тухнă халь инçе уя.

Паллă ĕнтĕ, питĕ паллă
Пĕтĕм халăх умĕнчи—
Кĕреçе пекех сухаллă
Мишавай, Кĕлпук мучи.

Аллинче вылять хăлаçĕ.
Вăл касать улпут çĕрне.
Çамрăксем çырса пыраççĕ
Мишавай каланине.

* * *

Пар лашаллӑ, питӗ меллӗ
Вӑркӑнса килет ҫулпа
Сиктӗрмеллӗ те кӳмеллӗ
Питӗ чаплӑ урапа.

Пысӑк хум пек тимӗр хучӗ
Пӗр сикет те пӗр анать.
Эх, атьсемӗр, ҫӗр улпучӗ
Ун ҫинче лара парать.

Пуртӑ йӑтӑр! Сенӗк тытӑр!
Пӑхӑр-ха, епле инкек!
Халӑхран ыйтмасӑр, йытӑ,
Килӗнчен тарать иккен.

Уртемей пырса ал-хапӑл
Пӗр лашин сӳсмененчен
Ярса тытрӗ, тӑпӑр-тапӑр
Тытса чарчӗ пӗр пӗччен.

Лапчӑнса ларать хӑюсӑр
Шурӑ питлӗ господин.
Хӑть те хӗнӗр, хӑть те пусӑр,—
Сурӑх пек шӑпланнӑ тин.

Нумаях пулмасть, ҫӳретчӗ,
Хӑпартатчӗ сехрене,
Тӗлпулсан, тытса хӗнетчӗ
Пирӗн ял ҫыннисене.

Уртемей унта кĕрлерĕ,
Паранçи пек пулчĕ ал:
— Пиншакна хывсамччĕ, —терĕ,—
Ырӑ çыннăм, генерал.

Генерал:—Тумланăр, мейĕр!—
Тесе хыврĕ пиншакне,
Тăхăнчĕ вăл Уртемейĕн
Çĕтĕк-çатăк сăхманне.

—Лентă тытнă шалавар та
Кирлĕччĕ,—тет Уртемей.
Генерал хывать сасартăк,
Нимĕскер те ӳркенмест.

Тăхăнать хăй Уртемейĕн
Кивĕ шăлапир йĕмне.
Ку кĕтӳçĕ пулĕ, тейĕн,
Пăхсанах улпут çине.

Хăраса ытла çӳçенчĕк
Ларакан улпутăнне
Уртемей хывса туянчĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне.

Уртемей ăна витлерĕ,
Ирĕксĕр тыттарчĕ ал:
—Санăн вăхăт иртнĕ,—
терĕ,—
Халĕ эпĕ генерал.



Ахӑрса кулать те халӑх
Шӑхӑрать-ҫке ши те ши!
Каллӗ-маллӗ сулламалӑх
Ёрӗхет пӗр пар лаши.

Хырӑмӗ тинех пушантӑр!
Самӑрччӗ-ха кӳлепи.
Ҫулсӑр-йӗрсӗр шӑлтӑр-
шалтӑр
Шӑлтӑртатрӗ урапи.

Уртемей мучимӗр пирӗн
Чаплӑ, пулчӗ, пӑхӑр-ха:
Ун ҫинче улпут тумтирӗ
Калама та ҫук паха.

Микулай патша „тӑванӗ",
Темелле, ӑна пӑхсан.
Хулпуҫҫи ҫинчи пагонӗ
Ылттӑнран та укаран.

Шалаварӗ кӑшт шалпар та,
Пӗлӗт евӗр кӑн-кӑвак,
Ҫӗлӗкӗ ҫинчи кокардӑ
Йӑлтӑр-ялтӑр ҫунчӗ ак.

Пур этем те лӑхӑл-лахӑл
Ӑш тытса кулаҫҫӗ-ҫке,
Пур енчен те генерал вӑл,
Чӑпӑкӗ анчах кӗске.

Пилĕк-ултă орден халĕ
Уртемей кăкри çинче,
Кĕскерех сайра сухалĕ
Килĕшмерĕ хальхинче.

Çăрарах ӳсесчĕ мурĕ,
Ик енче кĕççеленсе,
Кирлĕччĕ тата шит çурă
Хулăмрах ĕнсе!

Аттине хывса илмесĕр
Юлнă Уртемей пичче.
Генерал пулма илемсĕр,—
Çăпата урисенче.

—Пилешрен сан чăпăк пултăр,
Уртемей, хăвна кура!
Аллăна тыт çивĕч пуртă,
Пахчара табак тура!

Ĕмĕрӳ хăватлă пултăр,
Енчĕкне тултар табак.
Ункă-ункă тĕтĕм тухтăр,
Чĕлĕм çунтăр пăк та пак!

Туянатăн сарă атă,
Ӳстеретĕн мăн сухал.
Тин вара, мучи, пулатăн
Эс те вата генерал.

Пирĕн халăх урлă-пирлĕ
Уртемей пирки шӳтлет,
Çăмахсем юмах пек юплĕ,
Кашниннех кулас килет.

* *
*

Пирĕн ватă Уртемейĕн
Çак кунтан хайхи каять
Пуçланса тумтир телейĕ,—
Пĕтĕм ял ăна паллать.

Хамăр кӳршĕри ялта та
Калаçаççĕ ун çинчен.
Уртемей туянчĕ атă
Белебей пасарĕнче.

Уртемей чипер усратчĕ,
Пиншакпа шалаварне;
Якатса вăл тăхăнатчĕ
Хăнана каяс чухне.

Мухтанса пырса ларатчĕ
Уявра кĕрекене,
Пуçĕнчен вара хывмастчĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне.

Еçлесе те, калаçса та
Вăхăт иртрĕ ерипен.
Çĕтĕлчĕ чылай кăçатă,
Çĕтĕлчĕ чылай кĕпе.

Аставар-ха пĕчĕкçеççĕ
Ĕлĕкхи ачасене,—
Халь вĕсем те сиктереççĕ
Ачисен сăпкисене.

Кĕскерех сайра сухалĕ
Уртемейĕн шап-шурах.
Генерал тумтирĕ халĕ
Кивелмен, хитре çаплах.

Килĕре юри тӳтернĕ
Вĕт табак сапса ăна
Аслă кинĕ пит типтерлĕ
Хунă пулнă арчана.

* * *

Сисĕнмесĕр вăхăт шунă.
Çул çинчи мулкачă пек
Ăнсăртран çеç сикнĕ-тухнă
Акăш-макăш пĕр инкек.

Пĕр пăрçа ани колхозăн
Пурччĕ шурлăх патĕнче.
Вăл ана пулман пулсассăн,—
Пирĕн Уртемей пичче

Çĕлĕкне паян та халĕ
Мухтĕччĕ илемлĕрен;
Кӳршĕ-аршă, пĕтĕм ялĕ
Кулмĕччĕ Уртемейрен.

Тӑрнасем ҫӗрле лараҫҫӗ
Ҫавӑнта пӑрҫа сӑхма.
Колхозра хайхи хушаҫҫӗ
Мучие хурал тӑма.

Пӗлӗтсем хуллен ҫеҫ шунӑ.
Пулнӑ шутсӑр сивӗ кун.
Ҫӳҫенсе кайса ват юнӗ
Пӑсӑлма пултарнӑ ун.

Генералӑн шеп мундирӗ
Пулнӑ унӑн хальхинче,
Чаплӑ ҫӗлӗк, сӑсар тирӗ,
Ларнӑ пуҫӗ ҫиййӗнче.

Ҫӗрӗпе вӑл хӑваланӑ
Ҫӑтӑ пыр тӑрнасене.
Шуҫӑм килнӗ. Кирлӗ канӑҫ
Ывӑннӑ урисене.

Уртемей мучи, хуралҫӑ,
Путнӑ тутлӑ ыйхине.
Пуҫӗнчен йытсем хываҫҫӗ
Сӑсар тирлӗ ҫӗлӗкне.

Кутӑн-пуҫӑн тӑлпалаҫҫӗ,
Ҫӑлкалаҫҫӗ те ҫӑмне,
Йӑлӑхаҫҫӗ, тарӑхаҫҫӗ,
Пытараҫҫӗ тыр ӑшне.

Çамкине хуплана сывлăм.
Сиксе тăнă Уртемей:
— Вăрăсем тивмен, тет, сывă
Çумĕнчех иккен телей.

Çĕлĕкĕ çук — пысăк хуйхă,
Ухтарать мĕнпур çĕре.
Уртемей, халь хытă суй-ха,
Кăлтăксем тупса çӳре!

Уткаларĕ каллĕ-маллĕ,
Курчĕ çӳлĕ ту çине
Çĕлĕксĕр вăрăм хевтеллĕ
Выртнă хăйĕн мĕлкине.

Нимĕнле те лăпланмасăр
Тарăхать тăрнасене:
— Пурсăра тытсан, тăраймăр
Манăн çĕлĕкĕн хакне.

Вĕçĕмсĕр ĕмсе паккарĕ
Пăхăр пуçлă чĕлĕмне,
Тарăхса каллех ятларĕ
Çĕрлехи тăрнасене:

— Кĕркунне тархасшăн кайăр,
Ан та килĕр каялла!
Пĕçерсен, чĕн пек какайăр
Яш шăла та ватмалла.

Кĕлпука та вăл тиркерĕ,
Астуса иртнисене:
— Пăрçана актарчĕ,—терĕ,—
Çакă шурлăх хĕррине.

Ватăла-киле вăл лайăх
Пĕлмелле тăван хирне,
Ку тĕле паян та халăх
„Тăрна шурĕ“ тенине.

Хамăн та пур айăп ахăр:
Çуркунне пухусенче
Эх, каласчĕ ман, ухмахăн,
Тăрнасем пурри çинчен!

Ватăлсан та, ман ăс карчĕ
Çитеймерĕ. Эх те эй!..
Калаçса килне уттарчĕ
Пирĕн ватă Уртемей.

Килĕнче тӳшек-минтерĕ
Шăммине кантармалла.
— Çĕлĕкӳ ăçта-ши?—терĕ
Карчăкки хăратмалла.

— Кĕперпе каçса иртменччĕ...
Çил хускалчĕ вăр кăна,
Çĕлĕке пуçран ӳкерчĕ,
Çапрĕ-ячĕ çырмана.

Карчӑкӑм, мӗскер тӑватӑн?
Чупрӑм-антӑм шыв хӗрне.
Манӑн, анкӑ-минкӗ ваттӑн,
Вӑй пулать-и ун чухне?..

Ҫапларах суйса паратчӗ
Уртемей чылай вара.
Тыр вырас вӑхӑт пуҫланчӗ,
Кӗр-кӗрлерӗ пусӑра.

* *
*

Каҫ пулса килет. Туртатчӗҫ
Лашасем пит йывӑррӑн.
Путене вӗҫсе хӑпарчӗ
Вӑрттӑн тунӑ йӑваран.

Кӗлтесем ҫыхан хӗрарӑм
Тупнӑ унӑн йӑвине,—
Ҫӗлӗкре питех те тарӑн
Йӑва тунӑ путене.

Уртемей мучи, мӑнтарӑн,
Хыҫкалать ӗнсе хыҫне.
Пусӑран тухса та тарӑн,—
Тӳс-ха ҫӗлӗк мӑшкӑлне...

Арӑмӗ хайхи шӑмарчӗ
Ҫаврӑнчӗ мучи енне,
Хыттӑн-хыттӑн ҫутӑлтарчӗ
Виҫӗ хут Уртемейне.



28409 — чув.
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

—Ак сана, тет, çил хускалчĕ,
Акă каçрăн кĕпере,
Çĕрчĕ, тет, килйышăн ячĕ,
Çавăнпа, тет, ак тепре.

Хуралта тăран кахаллăн,
Çавăнпа хăлха чикки
Парăттăм, анчах та аллăм
Ыратать, тет, карчăкки.

Яланах суя кĕперĕ
Тăваканччĕ—ӳркенмен.
Пĕр сăмах та чĕнеймерĕ
Пирĕн ватă Уртемей.



1948 г.
Акт № 312
Вкладн. л.
Инв. № 297

Редактор В. Долгов. Тех. редактор И. Григорьев

НГ 05372. Подписано к печати 9 XII 1947 г. Объем 0,5 п. л.
Заказ № 93. Тираж 5.000

г. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпром.
при Совете Министров Чувашской АССР.

48-4113/6

Цена 1 руб. 50 коп.
Хакӗ 1 тен. 50 пус.

7652

П2

Ч

ЯКОВ УХСАЙ

# СОБОЛЕВАЯ ШАПКА

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1947